Çут çанталăка юратакансене пĕлме

Паллă вăрманçă Муркашсемшĕн ют мар

Шупашкарта ун ячĕллĕ урам пуртанах-тăр паллă вăрманçă Б. И. Гузовский пирки ачаранах илтмен çын Чăваш Енре çук та пулĕ. Кăçал вăл çуралнăранпа 150 çул çитет. Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Енĕн паллă вăрманçи Бронислав Ильич Гузовский Раççейри обществăпа политика, экономикăпа культура пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртнĕ вăхăтра пурăннă тата ĕçленĕ. Çав улшăнусем вăрман хуçалăхне те айккинче тăратса хăварман. Кунта вара хăйĕн пурнăçне вăрман ĕç-хĕлне халаллăнă Б. Гузовский тарăн йĕр хăварнă.

Бронислав Ильич Гузовский 1860 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Украинăри Ровно хулинче çуралнă. Ачаллах тăван тавралăха юратса ўснĕ каччă реальнăй училище хыççăн тĕп хулари вăрман академине (халĕ – Мускаври К. А. Тимирязев ячĕллĕ ял хуçалăх академийĕ) вĕренме кĕнĕ. Хăстар студент пĕлӳ илнĕ хушăрах ăслăлăх ĕçĕ çырнă. Академи канашĕ ăна вăрман ĕрчетес ĕç кандидачĕн степеньне панă. Çакăн хыççăн ученăй-вăрманçă вăрман ĕрчетес практикăлла ĕçе кӳлĕннĕ. Малтанах 25 çулхи çамрăк Кострома кĕпĕрнинче çулталăк хушши вăй хунă. Ўнтан Хусан кĕпĕрнине çитнĕ.

Хусан кĕпĕрнинчи юман вăрманĕсем, çав шутра Чăваш Енрисем те, пахалăхĕпе-продуктивлăхĕпе Раççейре те, ун тулашĕнче те ырăпа çеç палăрнă. Ку вăрмансем тĕлĕшпе Пĕрремĕш Петĕр патшаран пуçласах пысăк тимлĕх уйăрнă. Шăпах çакăнта Раççейри вăрман культури никĕсленнĕ. Кунти юманлăхсем çĕршыв аталанăвне, унăн çар ĕçне пысăк тӳпе хывнă. Пĕрремĕш Петĕр патша вăхăтĕнче кунти чи лайăх юмансене флот валли каснă. Çак «тимлĕх» йĕр хăвармасăр иртмен. 19-мĕш ĕмĕр вĕçленнĕ тĕле юманлăх лаптăкĕсем палăрмаллах сахалланнă. Çавăнпа та хăйне 1889 çулта Ильинка лесничествин лесничине çирĕплетсен, Б. Гузовский Атăлăн сылтăм енчи (пирĕн тăрăхри) юманлăхсене чĕртессипе ĕçлеме тытăнать.

Ку тăрăхри йывăçлăх территорийĕ хăйне евĕрлĕхĕпе палăрса тăнă. Ансăр тăрăх пулса вăл Атăл хĕррипе таçта çитиех тăсăлнă. Пĕтĕмĕшле лаптăкĕ 5272 гектарпа танлашнă. Ăна пăхса тăрасси тата çĕнĕлĕхсене шута илсе аталантарасси çăмăл ĕç пулман. Кунта ытларах 140-180 çулсенчи юмансем çитĕннĕ.

1896 çулхи çу уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чикме лесничествине (Ильинка тăрăхĕ ун йышне кĕнĕ) Петербургран каснă вырăнсене çĕнĕрен юман лартса ĕрчетес ыйтупа ятарлă комисси çитнĕ. Сумлă хăнасене Ильинка лесничествин лесничийĕ Б. Гузовский хисеплĕ рапортпа кĕтсе илнĕ. Комисси членĕсем икĕ эрне хушши кунти вăрмансенчи юманлăх ыйтăвĕсемпе, каснă лаптăксене çĕнĕ вăрман епле лартса чĕртессипе интересленнĕ. Вăрмансенчи санитари ларутăрăвĕ те вĕсене килĕшсех кайман. Комисси лесничисене сăнавлă йĕркепе вырăнсемпе килĕшсе тăракан вăрман культурисене лартса аталантарма, йĕкел акса юман хунавĕсем çитĕнтерме сĕннĕ. Анчах мĕнле майпа? Ун пирки комисси членĕсем шарламан. Лесничисене çул-йĕре тĕрĕс палăртма хăйсене ирĕк панă.

Б. Гузовский юманĕ – вăрман палăкĕ.

Бронислав Ильич çав çултан тытăнса вăрман хуçалăхĕнче сăнавсемпе тĕпчевсем иртерме пуçлать, туса ирттерни пирки статья хыççăн статья çырса журналсенче пичетлет, вăрман хуçалăх ĕçне çĕнĕлĕхсем кĕртет.

Тăрăшуллă вăрманçă 1867 – 1889 çулсенче вăрман каснă хыççăнхи 154 лаптăка тĕрĕслет, каснă лаптăксене 3 ушкăна уйăрать. Юманлăхсене искусствăлла майпа чĕртес тĕлĕшпе Б. И. Гузовский юман йĕкелĕсене 11 вариантпа акма тата сăнавлă участоксенче ўстернĕ калчасене 5 вариантпа лартма сĕнет.

Юманлăхсен сăнавлă участокĕсене лартассине Б. Гузовский пысăк мар лаптăксенчен пуçланă. 1896 çулхине вăл юман йĕкелĕсене – 13,7 гектар, 1897 çулта – 37,1 гектар, 1898 çулта 53,1 гектар т. ыт. те лартнă. Бронислав Ильича юманлăха ĕрчетес ĕçри кашни пулăм интереслентернĕ. Йĕкел пухасси тата ăна тирпейлĕ хĕл каçарасси, вĕсене акса калчасем тăвасси, лартнă калчасене пăхса тăрасси, вĕсем çинчи сăтăрçăсемпе кĕрешесси яланах вăрманçăн кун йĕркинче пулнă. Тĕллевлĕ ĕçлени 20-мĕш ĕмĕр пуçламăшĕнче Ильинка тăрăхĕнчи юманлăхсенчи лару-тăрăва ырă еннелле улăштарнă.

Хăй ĕçĕнче Б. Гузовский ют çĕршывсенчи опытпа та усă курса пынă. Çак тĕллевпе вăл 1904 çулта Германире пулса нимĕçсем юманлăхпа епле ĕçленипе паллашнă. Унтан таврăнсан вăл «Германири вăрмансенче 1904 çулта ют çĕршыва командировкăна кайнин отчетĕ» кĕнеке кăларать. Унта вăл нимĕç вăрманçисен ĕçне çутатнипе пĕрлех хăйĕн сĕнĕвĕсене те парать. Тепĕр çулхине вăл Тулăри вăрманçăсем юманлăхсемпе епле ĕçленипе кайса паллашса килет.

Б. Гузовский палăртнă тăрăх, шĕшкĕлĕхре яланах сулхăн, хĕвел çĕр çине витĕр ўкмест. Кунти çĕр кăпăшка, гумуспа пуян. Шĕшкĕ çук çĕрте курăк вăйлă ўсет, тăпра тимĕр пек типсе хытать, вăл тутлăхлă япаласенчен чухăн. Ун пек вырăнта юман вăй илеймест. Çавăнпа та йĕкел акма лаптăк тĕрĕс суйласси унăн практикинче пысăк вырăн йышăннă.

Бронислав Ильич хăй ĕçлесе пурăннă вăхăтрах вăрман ĕрчетме ятарлă программа хатĕрленĕ. Пирĕн енре 1896 – 1913 çулсенче ĕçлесе Ильинка лесничествинче вăл тăрăшнипе 1208 гектар юманлăх ĕрчетнĕ. 1912 çулхи çу кунĕсенче Хусанти патшалăх пурлăхĕпе çĕр ĕç управленийĕн пуçлăхĕн пуçарăвĕпе кĕпĕрнери лесничисене Ильинка лесничествине экскурсине илсе килнĕ. Кунти ĕç-хĕлпе паллашни курма килекенсемшĕн тĕлĕнтермĕш вырăннех пулнă. Каярахпа çак çул çӳрев пирки Хусанти сăнавлă лесничество вăрманçи А. Юницкий хăйĕн отчетĕнче çапла çырнă: «Ильинкăра тăван вăрмана юратасси, вăрман наукине малалла аталантарасси сӳнмен-ха. Çывăхри чукун çултан 100 çухрăмри вăрман шăплăхĕнче вăрман аталантарăвĕн малта пыракан шухăшĕсемпе тата ĕçĕсемпе тĕл пулни – сайра тĕл пулакан чăнлăх. Кунти савăнăçлă та çутă пуласлăхлă ĕçсем ĕмĕрлĕхе асра юлĕç».

1913 çул варринче маттур вăрманçăна Хусанти патшалăх пурлăхĕпе çĕр ĕç управленийĕн аслă ревизорне çирĕплетеççĕ. Бронислав Гузовский Хусана пурăнма куçать. Анчах ĕмĕрĕ кĕске пулнă. Ăста вăрманçă 1914 çулхи раштавăн 4-мĕшĕнче вилнĕ.

Б. И. Гузовский ячĕ Раççейри вăрманçăсен историйĕнче пысăк вырăн йышăнать. Унăн вĕрентĕвĕпе Чăваш Енри йывăç-тĕм çитĕнтерес ăстасем Л. Н. Никифоров, С. Т. Тихонов, П. Т. Тимофеев анлă усă курнă. Унăн теорийĕ паян та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатмасть.

Бронислав Ильич Гузовский вăрманçăна асăнса 1968 çулта Ильинка лесничествинче асăну палăкĕ лартнă, Шупашкарти пĕр урама унăн ятне панă.

Çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче Б. Гузовский çуралнăранпа 150 çул çитет. Республикăра унăн ĕçне малалла тăсакансем юбилее ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Г. СИМАКОВ,
çут çанталăка сыхлакан специалист.

Ял çыннисене пĕлме

Выльăх-чĕрлĕх е аш-какай сутма

Районта туса илекен выльăх-чĕрлĕх продукцийĕн ытларах пайĕ килти хушма хуçалăхсем çине тиеннĕрен, ял çыннисем хушшинче чĕрĕ выльăхсемпе тата вĕсенчен илнĕ продукципе суту-илӳ тăвасси яланах анлă шайра пулса пырать. Пасарсене те халăх нумай анать. Пасарсем вара пирĕн районта виççĕ: Юн пасарĕ (Турайра, кашни юн кун), Муркаш тата Мăн Сĕнтĕр (вырсарни кун) пасарĕсем. Вĕсенче чĕрĕ выльăх тата выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ сутакансем пайтах. Кусемсĕр пуçне Шупашкар районĕнчи Ишек пасарĕ те пирĕн халăхшăн хамăр пасарах. Пасарсем çынсемшĕн те сиенлĕ тĕрлĕ чир-чĕр сармалли вырăнсем пулса тăмаççĕ-и? Пасара чĕрĕ выльăх е хатĕр продукци сутма тухаканăн мĕн асра тытмалла? Çакăн тавра ирттертĕмĕр те эпир хамăр калаçава районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин ветврачĕпе Наталья Михайловна ЕГОРОВАПА. Пирĕн калаçуран хаçат вулакансем тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тăвасса шанатпăр.

– Пасарсем тĕрлĕрен чирчĕр сармалли вырăнсем пулса тăмаççĕ-и-ха тесе ыйтнипе килĕшетĕп. Йĕркене пăхăнмасан инкекĕ юнашарах çӳрет. Мĕншĕн тесен чирлĕ выльăх сыввине чирлеттерме пултарать. Выльăхпа çынсемшĕн пĕр евĕрлĕ чирсем вара çынсен сывлăхĕ çине витĕм кӳрес хăрушлăх та пур. Çавăнпа та эпир пасарсенче выльăх-чĕрлĕхпе е унран илнĕ продукципе сутă тăвакансене тĕрĕслесех тăма тăрăшатпăр. Тĕрĕслевсенче вара сутуçăсем часчасах «Ветеринари çинчен» саккун ыйтакан тĕрлĕрен ветсправкăсемпе ветсвидетельствăсем пирки «манни» курăнать.

– Кун пек чух выльăх сывлăхĕ е аш-какай тасалăхĕ питех те иккĕленӳллĕ. Çакна туянакансен те пĕлмелле. Çапла вĕт?

– Тĕрĕсех, кунта çирĕп йĕрке пулмалла. Пасара чĕрĕ выльăх сутма тухаканăн çумра выльăх таса-сывă пулнине çирĕплетекен ветсправка е Ф-1 ветсвидетельство пулмалла. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен вара республика тулашне выльăх ăсатма Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ирĕкне илмелле. Хушса çакна калатăп, ял çыннисен пасара выльăх-чĕрлĕх продукцийĕ сутма тухнă чух çумра выльăх-чĕрлĕх е аш-какай, сĕт е çăмарта, е ытти продуктсем килти хушма хуçалăхран пулнине ĕнентерекен справка пулмалла. Ăна пурăнакан вырăнсенчи ял администрацийĕсем параççĕ. Çапла вара çӳлерех асăннă тивĕçлĕ хутсем çумра пулсан çеç граждансем пасара пĕр шиксĕр тухма пултараççĕ.

– Аш-какайпа сутă тума уйрăм йĕрке пур-и тата?

– Ку ыйту нумай ял çыннине пырса тивет. Çавăнпа хурава та туллирех парам. Выльăха пусса сутас пулсан, малтанах унăн сывлăхĕ пирки ветсправка кирлĕ. Ăна вырăнсенчи ветеринари участокĕсен заведующийĕсенчен илмелле. Хыççăн пусса тирпейленĕ тушка çине паттшалăх ветучрежденийĕнче клеме çаптармалла, аш пахалăхĕ пирки справка илмелле. Кунта çакна асăрхаттарас килет. Клеме çаптарма, сысна тушки пулсан, пĕрле пуçĕ, сули, ўпке-чĕрепĕверĕ кирлĕ. Ене выльăхсен вара пуçĕ пулмасан та юрать. Клеме çаптарнă хыççăн продукцие ăçта сутма палăртнине кура (районти пасарсенче, район е республика тулашĕнче) тĕрлĕ формăллă справкăсем параççĕ. Çак йĕркесене пăссан сутă тумалли вырăнсене çитсен унта пулакан тĕрĕслевсенче ответ тытмалла пуласса кĕтсех тăр. Тăпăрчă, сĕт-çу, пыл, çăмарта сутакансен çумра продукци пахалăхĕ пирки ветсправка пулмалла. Çакна та каламалла: 1,2,4-мĕш номерлĕ ветсправкăсем 3 талăк çеç вăйра. Кунсăр пуçне вĕсем çине тĕрлĕ почеркпа е чернилпа çырнă, пичет уçăмлă курăнмасть, документа алă пусаканăн должноçĕпе хушамачĕ тата инициалĕсем çук е тулли мар, документа панă куна палăртман пулсан тата документăн копийĕ çеç пулсан, вăл ветсправкăна тĕрĕслевçĕ йышăнмасть. Ку йĕркене пăсаканăн вара саккунпа килĕшӳллĕн административлă ответ тытма тивет. Уйрăммăн палăртатăп, ашкакая район тулашне илсе тухас пулсан, унăн хуçин ветсправка мар, алăра ветсвидетельство пулмалла.

Выльăх-чĕрлĕхпе е чăх-чĕппе пасарта сутă тума специалистсем вĕсене клиникăлла тĕрĕслев хыççăн 1-мĕш номерлĕ ветсвидетельство (район тулашĕнче пулсан) е 4-мĕш номерлĕ ветсправка (район территорийĕнче) пуррипе вĕсем чиртен таса вырăнтан илсе тухнине пĕлсен çеç ирĕк параççĕ. Инфекциллĕ чир-чĕр пирки ыйту тухсан выльăхсене те, чăх-чĕпсене те сутасси пулмасть.

– Паян аш-какайран ытла сĕт-çупа суту-илӳ тăвакансем чылай. Вĕсем тĕлĕшпе мĕнле асăрхаттарусем пур?

– Эсир тĕрĕсех палăртрăр. Сĕт-çупа пасара тухас пулсан та ветеринарипе санитари экспертизи малти вырăнта. Пасар лабораторийĕнче экспертиза тухман сĕтпе сĕт продукчĕсене сутма чараççĕ. Çавăн пекех ĕне пăрулана хыççăнхи 7 талăкри сĕте те сутма юрамасть. Сĕт тата унран хатĕрленĕ продукци тĕлĕшпе ветсправка панă чух ветеринар инструкципе килĕшӳллĕн мастит, туберкулез, бруцеллез т. ыт. те тĕлĕшпе ирттернĕ тĕрĕслевсене тата çĕпĕр язвинчен тунă прививкăна кăтартса справка çырса парать. Продуктсене цинклă, таса мар, наркăмăшлă япаласем тытнă савăтсенчен сутма юрамасть.

– Административлă айăплавсем пирки каларăр та, виçисем еплерех-ши?

– Штраф виçисем пĕчĕкех мар. Чăваш Республикин «Ветеринари çинчен» саккунĕпе палăртнă пек уйрăм граждансен ветеринари йĕркине пăснăшăн 500-1000 тенкĕ, должноçри çынсен 3000-5000 тенкĕ, предпринимательство ĕçне-хĕлне юридициллĕ вăйра тăмасăр пурнăçлакансен 3000-5000 тенкĕ административлă тӳлев тӳлемелле пулать. Виççĕмĕшсен ĕçне 90 талăка чарса лартассине те саккунра пăхса хăварнă. Маларах асăннă айăплав виçи юридициллĕ лицосен 10000-20000 пин тенкĕпе е 90 талăка ĕç-хĕле чарса лартнипе танлашать.

Пирĕн тăрăхра çакнашкал пысăк йĕркесĕрлĕхсем пулмĕç, граждансем выльăх-чĕрлĕхпе тата унăн продукцийĕпе саккуна пăсмасăр сутă тăвасса ĕненсе вĕçлетĕп паянхи калаçăва.

Анатолий БЕЛОВ
калаçнă.

Спорт

Лайăх ăмăртнă

Апрелĕн 7–11-мĕшĕсенче Кстово хулинче «Б» класра бокс енĕпе Пĕтĕм тĕнчери турнир иртнĕ. Унта Дагестанран, Арменирен, Чечняран, Казахстанран, Украинăран тата пĕтĕм Раççейрен 600-е яхăн спортсмен вăй виçнĕ.

Çак ăмăртусене Муркашри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕнчен тата «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕнчен 7 спортсменран тăракан команди те хутшăннă. Вĕсенчен 5-шĕ хăйсен виçе категорийĕсенче

призерсем пулса тăнă. Кусем вĕсем Муркаш шкулĕнчен Иван Налимов (28 кг., 1-мĕш вырăн), Стас Кожевников (46 кг., 1-мĕш вырăн), Калайкасси шкулĕнчен Денис Грачев (32 кг., 1-мĕш вырăн), Гена Балканов (32 кг., 2-мĕш вырăн), Руслан Николаев (34 кг., 2-мĕш вырăн).

Физкультурăпа спорт комплексĕн инструкторĕ Михаил Николаев хăй те ринга тухнă, 60 килограмм виçе категорийĕнче 4-мĕш пулнă.

Ачасене ăмăртăва хатĕрлекенсем – ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн аслă тренерĕ С.В. Черкашин тата тренерĕ О.А. Сютруков тав сăмахне тивĕç.

Хамăр инф.

Сăн ўкерчĕкре: ăмăртуран – çĕнтерӳпе.

Объявление

Администрация Моргаушского района сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды, из категории «земли населенных пунктов» с кадастровым номером 21:17:280201:158, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Шатьмапосинское сельское поселение, д. Торханы, ул. Садовая, для строительства индивидуального гаража, площадью 1400 кв. м.

Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6 (здание администрации), кабинеты № № 312 и 317, с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 62-2-66.